Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

54 (7371) № ✻ Шăмат кун, 2006 çулхи июлĕн (утă) 1-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Июлĕн 1-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ПАЙЩИКСЕМ, ПОТРЕБИТЕЛЬСЕН КООПЕРАЦИЙĔН ĔÇЧЕНĔСЕМ, ВЕТЕРАНСЕМ!**

Сире Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ тата Раççейри потребительсен кооперацийĕ 175 çул тултарнă ятпа саламлатăп.

Чăваш Енри кооператив юхăмĕ паян йĕркеллĕ, эффективлă ĕçлекен тытăм пулса тăрать. Вăл тĕрлĕ енлĕ аталанать. Ку тавара курттăммăн тата ваккăн сутни, обществăлла апатлану, производство ĕçĕ-хĕлĕ, транспортпа тивĕçтересси, страхлас ĕç, пысăк квалификациллĕ специалистсем хатĕрлесси.

Чăвашпотребсоюз ялти йăла службин системине çĕнетсе улăштарассипе активлă ĕçлет. Çĕнĕ предприятисем уçать, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелет. Ял хуçалăх продукцийĕ, эмел чĕртаварĕ ытларах туянса ял çыннисен тупăшне ӳстерме пулăшать. Çапла майпа республика кооператорĕсем Раççейри агропромышленоç комплексне приоритетлă наци проекчĕ шучĕпе аталантарассине пысăк тӳпе хываççĕ. Чăваш ялĕсене çĕнелсе аталанма майсем туса параççĕ.

Чăваш Ен потребительсен кооперацийĕ хăйĕн ĕçĕпе республикăра та, унăн тулашĕнче те пысăк обществăлла авторитет çĕнсе илчĕ. Чăвашпотребсоюз вунă çул ытла çĕршыври кооператив юхăмĕн лидерĕсен шутĕнче.

Тăван ене аталантарассишĕн ырми-канми ĕçленĕшĕн тав тăватăп. Çирĕп сывлăх, тапса тăракан оптимизм, çĕнĕ çитĕнӳсем, тулли пурнăç тата телей сунатăп!

**Н.ФЕДОРОВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**ХИСЕПЛĔ КООПЕРАТОРСЕМ ТАТА СУТУ-ИЛӲ ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире хăвăрăн професси уявĕпе - Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Сирĕн ĕçĕр халăхăн пурнăçĕпе уйрăлми тачă çыхăннă. Тавар туянакансен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесе ырми-канми тăрăшатăр. Рынок хутшăнăвĕсен тапхăрĕнче те ура çинче çирĕп тăратăр. Çулсеренех эсир паракан пулăшусен шучĕ те, пахалăхĕ те ӳссех пырать. Çакă хăех эсир хăвăрăн ĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçланине çирĕплетсе парать. Сирĕн пархатарлă ĕçĕр районăн экономика аталанăвĕ, социаллă пурнăçне лайăхлатасси çине витĕм кӳрет. Тавах сире çакăншăн.

Эсир малашне те, умри йывăрлăхсене пăхмасăр, çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвасса, Центросоюзăн Пĕтĕм Раççейри тата Чăвашпотребсоюзăн республикăри ăмăртăвĕсенче малта пуласса шанатăп. Эсир районти çынсен пурнăçне пуянрах та хăтлăрах тăвассишĕн тăрăшасси пирки пĕрре те иккĕленместĕп.

Пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçупа пуçарулăх, вăрăм кун-çул, телей сунатăп.

**Ю. ИВАНОВ,**
**район пуçлăхĕ.**

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ИЮНĔН 29-МĔШĔ ТĔЛНЕ ВЫЛЬĂХ АПАЧĔ ХАТĔРЛЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Колонкăсенче: 1. Нумай çул ӳсекен курăксем çулнă. 2. Утă хатĕрленĕ. 3. Сенаж хывнă. 4. Силос хывнă (процентпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 13 | 6 | 0 | |
| “Волга” | 41 | 0 | 0 | |
| “Восток” | 44 | 49 | | 14 |
| “Герой” | 13 | 3 | 0 | 0 |
| ЗАО «Агро-Урожай» | 69 | 18 | | |
| К. Иванов яч. хис. | 41 | 5 | 60 | 7 |
| Ильич яч. хис. | 32 | 13 | 37 | 0 |
| “Колос” | 5 | | | |
| Ленин яч. хис. | 15 | 7 | 0 | 0 |
| “Лидер” | 16 | 4 | 0 | 0 |
| ГУП ЧР «ПФ «Моргаушская» | 65 | | | |
| “Нива” | 7 | 3 | 0 | |
| “Оринино” | 35 | 15 | 0 | 37 |
| “Передовик” | | 7 | 6 | 6 |
| “Свобода” | 40 | 9 | 3 | |
| “Сеятель” | 6 | 2 | 0 | |
| Суворов яч. хис. | 23 | 7 | 0 | |
| ООО АФ «Рассвет» | 15 | 4 | | 0 |
| ОАО АФ «Нива» | 0 | | | |
| “Ударник” | 53 | 13 | 47 | 0 |
| “Хлебороб” | 8 | 2 | 0 | |
| Чапаев яч. хис. | 23 | 7 | | 0 |
| “Чемеево” | 44 | 14 | | 42 |
| Чкалов яч. хис. | 17 | 0 | 0 | 0 |
| КФХ Михайлов А.Н. | 15 | 10 | 0 | |
| **Районĕпе** | **24** | **8** | **11** | **11** |

## “Симĕс ĕç çи” маршручĕсемпе

# Паха апат хатĕрлесси – паянхи ĕç

Яп-янкăр кăвак тӳпере сайра курăнакан шурă пĕлĕтсем анлă океанри турпассем евĕр кăна. Кăнтăртан хушăран килекен ăшă варкăш 30 – 32 градуслă шăрăха сиреймест. Ăçта ан пăх – пур çĕрте те чăн-чăн çу илемĕ. Çак илемпе киленсе çулла хыççăн кĕр кунĕсем, каярах сивĕ хĕл çитесси пирки те манас марччĕ. Ыранхи кунпа пурăнаканăн, тĕрĕссипе, паян кану çук та. Çак вăхăтра тулли ыйхă та çывăрса курайман ял çыннишĕн канлĕх тĕлĕкре кăна.

Ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен Е. Андреев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕ-завода пырса кĕрсен те кунти пурнăç вĕллери пек сĕрлесе тăни курăнать.

– Пурте пулсах каяймасть пулин те, çак кунсем обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли ытлă-çитлĕ паха апат хатĕрлемелли вăхăт пулнине хуçалăхри кашни ĕçчен çывăха илсе ăнланать. Ăнланать те – иртен пуçласа каçчен хирте вăй хурать,– терĕ тĕл пулун малтанхи самантĕнчех хуçалăх ертӳçи Н. Рудаков. Хуçалăх ăратлă выльăх заводĕ пулнăран выльăх йышĕ те Муркашсемпе Çурлатрисен сахалах мар. Вĕсенчен продукци илессине çитес хĕл кунĕсенче те чакарас мар тесен, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхăн вырмаччен юлнă вăхăтра 573 тонна утă, 1547 тонна сенаж янтăламалла. Председатель калашле, кусем пурнăçлама çук тĕллевсем мар.

...Хире тухрăмăр. Юрий Геннадьевич Максимов хăйне çирĕплетсе панă Е-302 косилкăпа нумай çул ӳсекен курăка гектар хыççăн гектар çулать. Хĕртсе пăхакан хĕвел питтинче курăк хăвăрт типет, паха утă пулать. Ăна вăхăтра пуçтарассипе вара уй-хир бригадисен ĕçченĕсемпе механизатор-водительсем пĕр çемьери пек тимлеççĕ, утăна хранилищĕсене турттараççĕ. Асăннă выльăх апатне хĕл каçмалăх янтăлассипе хуçалăхра алă тата механизаци вăйĕсемпе туллин усă кураççĕ. Акă, уй-хир ĕçченĕсем çулнă курăкăн пĕр пайне купана пуçтарнă пулсан, тепĕр пайне Михаил Атласкин механизатор рулонлă пресс-подборщикпа пухса хунă та ĕнтĕ. Пусăран утă турттарас ĕçре Виталий Романов **(сăн ӳкерчĕкре)**, Николай Оньков, Андрей Атласкин, Борис Александров водительсем хастар.

– Ĕç чĕрĕкне утă хатĕрлес ĕçре ирттерни маншăн хăйне евĕр кану: иртнĕ вĕренӳ çулĕнчен уçăлса илсе çĕннине хатĕрленсе аслисемпе пĕрле вăй хурса çĕнĕ шухăшсем çуралаççĕ, пурнăça çывăхарах тăваççĕ,– тет тулли сенĕк утă йăтса кăçал Муркашри вăтам шкулта 10 класс пĕтернĕ Люба Онькова **(сăн ӳкерчĕкре)**. Çамрăк хĕрĕн сăмахĕсене хирĕçлеме çук.

Кунта хире хуçалăхăн тĕп агрономĕ Владимир Алексеевич Димитриев пырса çитрĕ. “Ĕç хăвăртлăхĕ çӳллĕ шайра пултăр тесе пур енлĕ тимлетпĕр. Акă, хирте кунĕпе ĕçлекен механизаторсене кăнтăрлахи тата каçхи апата вырăна тухса çитеретпĕр. Утă хатĕрлес ĕç кал-кал пырсан кĕçех сенаж çине тухассине те пăхатпăр”,–- терĕ вăл ĕçлекенсен тăрăшулăхне палăртса.

Хуçалăхăн кăçал 400 гектар çинчен нумай çул ӳсекен курăксене, 180 гектар çинчен пĕр çул ӳсекен курăксене çулса пуçтарса кĕртмелле.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**









## Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕ умĕн

# Ял çыннин пурнăçне лайăхлатассишĕн

Чăваш Республикин федераллă инспекторĕ ертсе пынипе “2006 çулта Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕн” планĕпе килĕшӳллĕн июнĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 10-мĕшĕччен куçса çӳрекен агитаци пункчĕ ĕçлеме пуçларĕ. Иртнĕ эрнере вăл пирĕн районти Мăн Сĕнтĕрте пулчĕ. Тĕл пулу ял çыннисемпе универмаг çурчĕ умĕнче иртрĕ.

Чи малтанах Чăвашстатăн ертӳçи Ю.К. Марсов пухăннисен умĕнче Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕн тĕллевĕсемпе задачисем çинче чарăнса тăчĕ.

– Чи кирли – çырава хутшăнма шикленмелле мар. Мĕншĕн тесен çак кампани çĕнĕ налуксем хурассипе мар, халăхăн пурнăç шайне лайăхлатассипе çыхăннă,- палăртрĕ Юрий Клементьевич.

Пуçтарăннисене Чăваш Патшалăх филармони артисчĕсем концерт лартса пачĕç. Куçса çӳрекен агитаци пунктĕнчисем халăхпа пĕр чĕлхе тупма çакă та çирĕплетсе парать: вĕсем тĕрлĕрен конкурс та йĕркелерĕç. Халăх кĕввине выляссине хăйĕн пултарулăхне кăтартнă “Рассвет” хуçалăх рабочийĕ П.Б. Пафнутьев “Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕ” эмблемăллă футболкăна тивĕçрĕ.

Çакнашкал тĕл пулу çав эрне кунах автостанци территоринче те пулса иртрĕ.

Тĕпрен илсен вара Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравне хатĕрленесси районта малалла пырать. Иртнĕ эрне кун çыравçăсен (вĕсем пĕтĕмпе 118ăн) вĕренĕвĕ иртнĕ эрнере вĕçленчĕ. Вĕсем хăйсем çак ĕçе хатĕррине тест витĕр тухса çирĕплетсе пачĕç.

Шăмат кун вара çыравçăсен ĕçĕ пуçланчĕ. Вĕсем Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравне хутшăнакан объектсене малтанласа пăхса тухма пуçларĕç. Ку ĕç 7 куна пырать. Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕ тавра калаçнă май ăна пирĕн районта ирттерессишĕн яваплă С.Ф. Кириллова уполномоченнăй çакна палăртрĕ:

– Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕ ял хуçалăх таварĕ туса кăларакансене пурне те пырса тивет: дача, садпа пахча тытакансенчен пуçласа фермер хуçалăхĕсем, пысăк ял хуçалăх предприятийĕсем таранах. Ял хуçалăх çыравĕн результачĕсем вара аграри отраслĕнчи паянхи лару-тăрăва тĕрĕс хак пама пулăшĕ, ял хуçалăх таварне туса кăларакансемпе вĕсен вăйне пĕлме май парĕ. Çапла майпа Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕ çĕршыва инвентаризацилеме пулăшĕ.

Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕнчи ыйтусем чи малтанах усă куракан çĕр лаптăкĕ, выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк, лартнă йывăç-тĕмĕ мĕн чухлĕ пулнине пырса тивеççĕ. Хресченсенчен çавăн пекех вĕсен пурнăç условийĕсем çинчен те ыйтаççĕ. Тĕслĕхрен, ялсенче çулсем пур-и, электроэнерги, газ кĕртнĕ-и, çыхăну пур-и. Çак ыйтусен хуравĕсем вара ял çыннине мĕн енĕпе ытларах пулăшу кирлине пĕлме май параççĕ. Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕ çавăн пекех социаллă инфраструктурăна лайăхлатма май парать. Кĕскен каласан, ял çыннине вырăнлă пулăшу памалли çул-йĕре тупма пулăшать. Пĕтĕмлетсе каласан, аграри секторне çĕнетсе улăштарассинче, çынсен пурнăçне лайăхлатассинче тĕп шăнăр пулса тăрать.

**Л. ТУКТИНА.**

## Парти пурнăçĕ

# Çыруран тухса тăракан задачăсене сӳтсе яврĕç

Кĕçнерни кун “Пĕрлехи Раççей” партийĕн Муркаш вырăнти уйрăмĕн черетсĕр конференцийĕ пулса иртрĕ.

Конференцире делегатсем РФ Президенчĕ Федераллă Пухăва янă Çыруран тухса тăракан задачăсене сӳтсе яврĕç. Регионти конференцие кайма делегатсем суйларĕç.

## Августран илсе тăма çырăнтараççĕ

**Хаклă вулакансем! «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата августран илсе тăма çырăнтараççĕ.**

**Малалла та пĕрле пулар!**